Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

Автор: **Сарби (Бородкина-Яковлева) Раиса Васильевна**

Книга: **Хӗвел мулкачӗсем**

Стих: **Капăр тум халь тăхăнатпăр**

Тӗслӗх кăтартсам, куян,
Курăнар паян пуян,
Тăхăн капăр кӗпеме
Уявра халь çӳреме.

Тӗлӗнӗ атте-анне
Курсанах хӗр-куянне:
– Пирӗн килте пур иккен
Пит хитре куян-пике!

Ун валли принц тупмалла,
Лавккана васкамалла!..
Атте куян-принц туянӗ,
Савăнӗ пике-куянӗ.

Тяппипе принц пуçран шăлӗ –
Тăхăнтарӗ пуç кăшăлӗ:
– Эс – çураçнă хӗрӗм, – тейӗ,
Хӗр-куянăм хӗпӗртейӗ.

Куян туйӗ чаплă кӗрлӗ,
Пит нумай куян-тус вӗрлӗ –
Пăхӗç ман куян çине.
Сăнӗç мана – хуçине.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.